**ЮБИЛЕЙ**



# «Чăрсăр туйăмпала çĕнтерсе çĕкленем...»

Августăн 2-мĕшĕнче Альпăрт Канаш (Кожанов) поэт çуралнăранпа 80 çул çитрĕ. Ача чухне скульптор пулма – халăхăмăрăн аслă та чаплă ывăлĕсемпе хĕрĕсене чысласа ĕмĕр манăçми палăксем лартма ĕмĕтленнĕ вăл. Анчах тăван ялĕнче – Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрьски шкулĕн 10-мĕш класĕнче вĕреннĕ вăхăтра ăна сасартăк йывăр чир çапса хуçнă. Пурпĕр пуçне усман вĕри чĕреллĕ яш. Акă мĕн çырать Альберт Георгиевич автобиографийĕнче:

«Мĕн ачаран эпĕ хăйсен пĕтĕм пурнăçне халăх ырлăхĕшĕн пурăнса ирттернĕ паттăрсен çутă сăнарĕсемпе хавхалана-хавхалана ӳснĕ, «пурнăç вăл – кĕрешӳ» текен ăнлану манăн ăс-хала ир кĕрсе йăва çавăрнă, хама çуратса ӳстернĕ ĕçчен чăваш халăхĕн аптраманлăхĕ те ман чĕрене кĕмесĕр юлманах. Çавăнпа ĕнтĕ пурнăçра хама пысăк инкек çитсе çапни маншăн хĕвел çути тĕксĕмленсе килмелĕхех хăрушă пулаймарĕ, вун çиччĕри пуçпах вырăн çине тăлланса ӳкнĕ хыççăн та, тухтăрсен «шанчăк çук» текен приговорне итлеме тивнĕ хыççăн та, этемĕн пĕтĕм вăй-халĕпе ĕмĕт-туртăмне пăркăчласа хуракан хура вăй, пессимизм, манăн чуна самантлăх та йăпшăнса кĕреймерĕ, пурнăçа, «çакă çутă тĕнчене» юратас вĕри туйăм нимĕн чухлĕ те сивĕнмерĕ, вăйсăрланмарĕ. Павел Корчагин, хăйĕн маннинчен те хăрушăрах чирне пула «çамрăклăхпа кĕрешӳ ырлăхĕн» тулашне тухса ӳкнĕскер, малтанхи тапхăрта умри кун-çулĕ пирки час-часах салху шухăша каять, самантлăха тенĕ евĕр хăй çине хăй алă çĕклес кăмăл та хускалать ун. Çавă парăнуллă йăшăк кăмăла вăл чăн-чăн этемле çĕнтерет, татăклăн сирсе ывăтать. Çапах та малтан çав кăмăл амаланса пăхать-пăхатех ун. Манăн вара – хам ума çавнашкал асаплăран та асаплă «Кирлĕ-и тек пурăнни? Е кирлĕ те мар-и?» ыйтусем лартас шухăш пуçа та пырса кĕмерĕ, – чи йывăр вăхăтра та, самантлăха та пырса кĕмерĕ. Мĕншĕн тесен Павел Корчагин (хам мĕн пĕчĕкрен кăсса кайса, пĕр савăнса та пĕр тĕлĕнсе юратнă паттăр этемĕм!) вăл ыйтусене тахçанах татса панă-çке: хăйшĕн те, маншăн та татса панă!..»

Скульптор пулма ĕмĕтленнĕ Альпăрт хăйĕн кун-çулне поэзипе çыхăнтарать. Йывăр чире парăнмасăр халăхшăн кирлĕ ĕç туни, çырни уншăн пысăк телей пулнă.

«Чăрсăр туйăмпала çĕнтерсе çĕкленем,
Чаплă ĕмĕр çинчен сăвăсем кĕвĕлем»,

– тет çыравçă чи малтанхи «Шăпчăксем, шăпчăксем...» сăввинче (1949 çул).

Пĕтĕм кун-çулĕ тăршшĕпех çак шухăш тĕввине тĕпе хурса пурăннă Альпăрт Канаш. Иртнĕ эрне кун Чăваш наци музейĕнче паллă сăвăçа халалласа выставка уçăлчĕ, паян К.В. Иванов ячĕллĕ литература музейĕнче поэзи касĕ пулать. Унта А. Канаш премийĕн çĕнĕ Лауреатне те чыслĕç. Кăçал çак хисепе РФ Писательсен союзĕн членĕ Станислав Куснар (Иванов) «Сĕмĕл çулĕ» тата «Салтак кун-çулĕ» кĕнекисемшĕн тивĕçрĕ.

Паян эпир сире А. Канашăн икĕ сăввине вуласа пăхма сĕнетпĕр.

Петĕр Çăлкуç.

## Альпăрт КАНАШ

### Тăри юрлать

Çӳлте-çӳлте
тăри юрлать, –
Тăри юрлать –
уй янăрать...

Тăри пекех
Куллен, ялан
Пуласчĕ ман
ĕçпе тăван.